ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# Пирĕн библиотекăсен ĕçне пысăк хак параççĕ

## Апла пулин те татса паман ыйтусем пур-ха

***Иртнĕ шăматкун Пĕтĕм Раççейри библиотека кунĕ пулчĕ. Ăна Раççей Президенчĕ 1995 çулта çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче йышăннă Указпа килĕшӳллĕн кăçалхипе çирĕм виççĕмĕш хут паллă турĕç.***

Чăваш Енри библиотека тытăмĕ пирки мĕн калама пулать? Тĕрĕссипе, самай лайăххине. Çĕршыври библиотекăсен ĕç-хĕлне тишкернĕ чухне пирĕн вулавăшсен ĕç опытне пысăка хурса хаклаççĕ, уйрăмах ялсаларисенне. Ахальтен мар. Ялти вулавăшсен ĕçне çĕнĕлле йĕркелеме республика ертӳçи 2003 çулта указ кăларнă хыççăн пăр тапранчĕ. Ун чухне чухăн та сăнсăр библиотекăсем вырăнне çĕнĕ йышши 500 библиотека туса хума тĕллев лартнăччĕ. Астăватăр пулĕ: 2007 çулта Раççей Президенчĕ Патшалăх Думине янă Çырăвĕнче Раççей библиотекисене васкавлăн çĕнетме тĕллев палăртнă вăхăт тĕлне Чăваш Енре хамăрăн указа пурнăçа кĕртнĕччĕ те ĕнтĕ. Çавна май çĕнĕ ĕçсене пурнăçа кĕртме те майсем тупăнса пычĕç.

Юлашки вăхăтра пухнă опыт Раççейри библиотекарьсен пĕрлĕхĕшĕн, чи малтанах хамăр халăхшăн, тĕлĕнмелле пысăк. Ун хыççăн ялта вулавăша çӳрекенсен йышĕ темиçе хут ӳснĕ. Кунта Интернетпа, электронлă ресурссемпе усă курасси йăлана кĕнĕ. Пĕр мухтанмасăрах, иккĕленмесĕр çапла каламалла: федерацин Атăлçи округĕнче кăна мар, Раççейре те эпир библиотека ĕçĕнче саккун кăларакан пулса тăтăмăр, çав шутра кĕнеке вулас енĕпе те пирĕн кăтартусем япăх мар.

Иртнĕ çулхи ĕç-хĕл пирки мĕн калама пулать-ха? Вулавăшсене çĕнĕ кĕнекесемпе пуянлатасси – тĕп тĕллевсенчен пĕри. Пĕлтĕр ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пулăшнипе библиотека фончĕсем Чăваш кĕнеке издательствин, çĕршывăн ытти издательствин кăларăмĕсемпе 4 миллион тенкĕлĕх пуянланнă. ЧР Наци библиотеки хăйĕн 145 çулхи юбилейне паллă турĕ, çавна май вулакансене культурăпа çут ĕçĕн çĕнĕ центрĕсемпе тивĕçтерчĕ. Ют çĕршыв литературипе кăсăкланакансем халĕ Пĕтĕм Раççейри Рудомино ячĕллĕ ют çĕршыв литературин патшалăх библиотекин ĕçĕсемпе усă курма, хĕвел тухăç культурине юратакансем Китай информаци-культура центрĕнче тĕл пулма пуçларĕç.

Православи кĕнекисен регионсен хушшинчи «Сăмах савăнăçĕ» кĕнеке куравĕ-ярмăркки те республикăн культура пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварчĕ. Кураври чылай кĕнеке республика Правительстви çине тăнипе районсемпе хуласен библиотекисене пуянлатрĕ.

Чăваш Енре çамрăк вулакансемпе тимлĕ ĕçленине федераци шайĕнче те лайăх пĕлеççĕ. Иртнĕ çул Раççей Культура министерстви пулăшнипе ачасемпе çамрăксен республика библиотекинче çĕршывăн 10 регионĕнчи – Мускав, Белгород, Брянск, Киров, Чулхула, Орел, Псков, Саратов облаçĕсен, Мари Элпа Чăваш Республикисен – çамрăк библиотекарĕсем, кĕнеке кăлараканĕсем, писателĕсем тĕл пулчĕç. Икĕ куна тăсăлнă мероприятисен вăхăтĕнче республикăра ачасен вулавне ӳстерес тĕлĕшпе пухнă опытпа паллашрĕç.

Наци библиотекин пуçарăвĕпе республикăра темиçе çул умлă-хыçлă «Чăваш Енри литература: çулталăкра чи нумай вуланнă кĕнеке» конкурс иртет. Унсăр пуçне библиотекăра тĕрлĕ мероприяти пурнăçа кĕрет. Чăваш кинематографĕсен «Асам» фестивалĕ-и, Шупашкар йышăнакан Пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль-и е тата ытти форум-и – Светлана Старикова ертсе пыракан коллектив пулăшма майсем тупатех.

Хальхи вăхăтра республикăра 508 библиотека, çаксенчен 460-ăшĕ – районсенче. Вĕсене патшалăх тата муниципалитет вăйĕпе тытса тăраççĕ. Кашни вулавăшăн хăйĕн сайчĕ пур. Çавна май çакă, Интернетпа танах, информаци илмелли хушма çăл куç. Муниципалитет тытăмĕнчи вулавăшсен кĕнеке фондне пуянлатас тĕлĕшпе иртнĕ çул кашни библиотекăна вăтамран 192,3 кĕнеке туянса панă. Çапла майпа вулавăшсем 1,6 процент чухлĕ çĕнелнĕ. Хăш-пĕр районăн кăтартăвĕ самай лайăхрах. Сăмахран, Етĕрнесем кашни вулавăш валли 409 кĕнеке туянма мехел çитернĕ, Канашсем – 346. Çав вăхăтрах Вăрмарсем пурĕ те 84 кĕнеке кăна.

Периодика кăларăмĕсене çырăнса илес енĕпе те Етĕрнесемпе Канашсем ырă тĕслĕх кăтартаççĕ. Шупашкар, Çĕрпӳ тата Хĕрлĕ Чутай районĕсем те хаçат-журнал вулама юратни палăрать. Анчах Шăмăршă районне мĕн пулнă? Унта кашни вулавăша пурĕ те 2,6 экземпляр хаçат-журнал кăна тивет. Сĕнтĕрвăррисен кăтартăвĕсем те савăнтармаççĕ.

Пирĕн вулавăшсем тĕслĕх шайĕнче тетпĕр-ха, анчах вĕсем тĕнче стандарчĕпе килĕшӳллĕн 1000 çын пуçне çуллен 250 кĕнекепе пуянланмалла. Библиотекарьсен пĕлĕвне ӳстерессипирки те манмалла мар. Республикăра ку тытăмра 1071 çын ĕçлет, вĕсен 32 проценчĕ кăна хăйсен профессийĕ енĕпе ятарлă аслă пĕлӳ илнĕ, районсенчи кăтарту тата пĕчĕкрех – 23,6 процент, çавăнпа тĕслĕх библиотекăсем тунипех çивĕч ыйтусене татса панă теме иртерех. Шансах тăратăп: вĕсене пурăна киле пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн те пулин уçăмлатма май килĕ.

**Надежда СМИРНОВА.**



**Вера АРХИПОВА, ЧР Наци библиотекинчи «Мерчен» музыка тĕпелĕн ертӳçи:**

– Пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ библиотекăра «Мерчен» музыка тĕпелĕ ĕçлет. Тĕрлĕ çулти вулаканшăн вăл пĕлĕве тата культурăна ӳстермелли центр пулса тăчĕ. Çак тапхăрта «Мерчен» вăйĕпе вун-вун фестиваль, презентаци, конференци, концерт, усă калаçу, курав ирттертĕмĕр. Кунта кĕнекери сăмах, поэзи, живопиç, кино пĕр тĕвĕре. Вĕсем вулакана эстетика воспитанийĕ пама, ӳнерпе пултарулăх культурине аталантарма пулăшаççĕ. Кунашкал центр пирĕн вулавăшра иртнĕ ĕмĕрĕн 50-60-мĕш çулĕсенче те ĕçленĕ. Ăна тăван культурăпа искусствăн паллă деятелĕсем Тамара Чумакова, Мария Асламас, Мефодий Денисов, ыттисем йĕркеленĕ. Вĕсен ырă йĕрне паян та тытса пыратпăр, вулакансене кĕнекепе кăна мар, кĕвĕ-çемĕ урлă та библиотекăпа çывăхлататпăр.



**Наталия РОМАНОВА, Елчĕк районĕнчи тĕп библиотека директорĕ:**

– Районта 23 вулавăш, унта 35 çын ĕçлет. Кашни тăрăшуллă, хастар, çапах вĕсен йышĕнче тата питĕ маттуррисем пур. Акă иртнĕ çул кăтартăвĕпе «Районти чи лайăх библиотека» ята Кĕçĕн Таяпари вулавăш тивĕçрĕ, библиотекарьсен хушшинче Тăрăмри Светлана Михайлова палăрчĕ. Курнавăшри çамрăк çемьесен «Пурнăç илемĕ» вулавăшĕн директорĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Раиса Горшкова районсенчи культура учрежденийĕсен ĕçченĕсен республика конкурсĕнче çĕнтерчĕ. Вулакансем пирки калас тăк вара ял çыннисем чăваш çыравçисенчен Ангелина Павловскаян, Улькка Эльменĕн, Геннадий Максимовăн прозине, Лидия Филиппован поэзине юратса вуланине асăрхатăп. Чăваш çыравçисемпе сăвăçисем малашне те пирĕн вулакансене хăйсен илемлĕ хайлавĕсемпе савăнтарччăр, эпир вара халăха вуламашкăн илĕртме майсем тупăпăр.